27-132 12

...ЕНОВ, Т. С.

# МĂНАСТИРТЕ

ИКĔ ПАЙЛĂ КОМЕТИ

СССР-ТИ ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
МУСКАВ 1927

СЕМЕНОВ, Т. С.

# МĂНАСТИРТЕ

Икĕ пайлă комети

НКП хушнипе кăларнă.

Ретаксилемен. Автăрĕ мĕнле çырнă — çапла çапнă

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви

Мускав — 1927

КНИЖНАЯ ФАБРИКА
ЦЕНТРАЛЬНОГО
ИЗДАТЕЛЬСТВА
НАРОДОВ СССР
МОСКВА, ШЛЮЗОВАЯ
НАБЕРЕЖНАЯ, 162

Главлит № 92.519
Тираж 1.000 экз.

Заказ № 1769

## Выђакансем.

1) **Çерахвим атте** — 27 çулта, хура çын. Ӑна вађли шалпар çанлӑ потриçник, хӳреллӗ камилавкӑ тата килте çӳремелли потриçник кирлӗ.

2) **Иоанн атте** — 65 çулта, шурӑ сухаллӑ. Ӑна вађђи хӳремлӗ камилавкӑпа шалпар çанлӑ потриçник кирлӗ.

3) **Соççим атте** — 40 çулта, унӑн та çав йапаласемех пулмалла.

4) **Наташшӑ**—25 çулта, сарӑ хӗр, вӗреннӗрехскер. Ӑна вађли манашкӑ (послушнитсӑ) тумтирӗсем пулма кирлӗ.

5) **Павӑл** — 21 çулта, хура çын, хӑйусӑрскер. Унӑн шӗвӗр çӗлӗк (скухйа) тата тӳр пилӗклӗ вӑрӑм тумтир (потриçник) пулмалла.

6) **Миттӑ**—23 çулта, сарӑ ађа. Тумтиррисем Павӑлӑнни пекех пулмалла.

7) **Микулай**—19 çулта, тумтиррисем çавсемех.

8) **Мађӑ, Тађӑ**—иккӗшӗте 19—20 çулта, тулли ӳтлӗскерсем, хула хӗрӗсем, лайӑх тумланнӑскерсем.

9) **Хветӗр**—19 çулта, çӳллӗ ађа, реађни шкулта вӗренекенскер, çут тӳмеллӗ мунтирпе, картусӗ те реалиссен пек.

10) **Ратошкевиђ**—48 çулта—Мађӑн ашшӗ, пођак, пуштӑри ђинавник; уссисем вӑрӑм; çут тӳммеллӗ тумтирпе, картусӗ какартлӑ.

# 1-МĔШ ПАЙĔ.

## ПĔРРЕМĔШ КУРĂННИ.

Ку ĕç 1915 мĕш çулта, Хусанта, Зилантăв мăнастирĕнҫе пулнă. Вăйă вырăнĕ Çерахвим аттен пӳлĕмĕ (келйĕ). Сылтăм йенҫе краваҭ; сулахай йенҫе сĕтел, шкап, пукансем пур. Сĕтел йенҫи кĕтесре турăшсем пур. Çерахвим хăй краваҭ çинҫе çывраҭ. Çур-çĕр иртнĕренпе 4 сехет çитнĕ. Йоанн атте, мăнастирти хуралçă, манахсене шăнкăравпа вăратса çӳрет. Çерахвим атте пурăнакан пӳртĕн кĕритурне кĕрсе, шăнкăравне шанкăртаттара пуçлаҭ; унтан Çерахвим аттен пӳлĕмĕ алăкне тӳнлеттерсе, шăнкăравне шанкăртаттарса—пирĕн турă çырлах пире!—тесе кăшкăрса йараҭ.

**Çĕрахвим атте** (йăйăх тĕлĕшĕпе) Амин!.. (пăртак йăшăлтатса вывртаҭ те каллех çывăрса кайаҭ, ҫан çапаҭ).

**Иоан атте** (шăнкăравне шанкăртаттарса тепĕр хут пыраҭ) Пирĕн турă çырлах пиресе!!! (хытă кăшкăраҭ).

**Çерахвим атте** (тарăхса, пуçне утийал айĕнҫен кăларса) Амин!! Илтетĕп вĕт! Ах мур пуçĕ! Хăл. хана çураҭ вĕт усал шăнкăравĕпе!..

**Иоанн атте**. Тăмасан тăмăн вара, ман ĕç çук, архимантрит ҫиркӳре ҫĕрпуççи çине лартнине мантăн пулмалла. (Кĕритуртан тухса кайаҭ).

**Çерахвим атте.** (Краваť çинђен тăрса карăнкаласа). Ааах! Лайăх канлĕ çывăрас ђухне вăратса çŷрет мур пуçĕ. (Анасласа илет те аттине тăхăнаť). Ну пайан, архимантритăн хăнана каймалла пулсан, маншăн пит телейлĕ кун пулĕђђĕ, вара хуран куккăђисем (пелменсем) çăвар туллин хыпăттăм. Хĕр-арăм мăнастирĕнђен Наташшă та килмелле-ха. Ей, вара-а-а! Мĕн тăвап епĕ ђиркŷве кайса. Ахаљ те епĕ пайан тешурнăй тийаккăн мар, епĕ унта пĕр пус та тупайас çук. Пайан апат келлинђе халăх нумай пулаť пулĕ-ха, тешурнăй тийаккăн пулнă пулсан тепĕр вун тенкĕ çаклатнă пулăттăм та... (алăк хыçĕнђе шаккани илтĕнет).

## 2-МĔШ КУРĂННИ.

**Соççим атте.** Пирĕн турă çырлах пире!

**Çерахвим атте.** Амин! Мĕн хайкăлтатса тăратăн, кĕр! (Соççим кĕрет).

**Соççим атте.** Кайасах-ши вара?

**Соççим атте.** Каймасăр (пукан çине лараť) тата епĕ пайан тешурнăй тийаккăн вĕт!..

**Çерахвим атте.** Вăл маншăн тимĕн те мар, мана та ђерет çитĕ-ха тешурнăй тийаккăн пулма.

**Соççим атте.** Пĕркуннехи ђеретре есĕ ђилай укçа турăн пулмалла, çавăнпа та халĕ хăпмастăн.

**Çерахвим атте.** Ђилай темеллех мар та, пĕр 12 тенке йахăн пулнăђђĕ, ну ун ђухне вĕт ђиркŷре халăх та нумайђђĕ.

**Соççим атте.** Халăхĕ пайан та сахалах пуљмĕ теха вăл, анђах архимантритпа пĕрлĕ слушит тумалла пулмасť-ха. Шутпала ун пайан слушит тумалла-ђђĕ, а вăл хĕвел-тухсанах таçта кайрĕ тет.

**Çерахвим атте.** (хĕпĕртенипе) ђăнах-и?

**Соҫҫим атте** ҭӑн, ҭӑн...

**Ҫерахвим атте**. Атла пулсан епӗ ҭиркӳве каймастӑп.

**Соҫҫим атте**. Ак тата!..

**Ҫерахвим атте**. А мӗн ак тата пур унта! Пӑнимайӗш пайан епӗ мӗн пурӗ те виҫӗ сехет анҭах сывӑрнӑ. Ҫуллахи ҫӗр кӗскине кам пӗлмест, а епӗ 12 сехетре ҫӗрле тавӑрантӑм та пӗр ҫур сехете йахӑн малитвенникпе лартӑм, тата тепӗр ҫур сехет хапха айӗнҭен кӗнӗ ҭух тапкаланса иртертӗм (пӑртак ҭарӑнса) Вилнӗ пек ҫывӑрса кайнӑ, шӑлавара та ҫийелти кӗпене те хывман, ҫаплах выртнӑ, темӗн тӗрлӗ тӗлӗксем курса пӗтнӗ.

**Соҫҫим атте**. Тӗлӗкрете хӗр-арӑм мӑнастир хыҫех курӑнат пуљ ҫав.

**Ҫерахвим атте**. Хӗр-арӑм мӑнастирӗ те тем те курнӑ...

**Соҫҫим атте** (пукан ҫинҭен тӑрса). Ну ман кайас-ха. Есӗ пымастӑн еппин?

**Ҫерахвим атте**. Ҫук, ҫук... Анҭах есӗ ман ҫинҭен „ҭирлӗ“ тесе пӗлтер.

**Соҫҫим атте**. Ну йурӗ... йурӗ (алӑк патнелле утса кайат).

**Ҫерахвим атте**. Ей! ҭим-ха! Уттец архимантрит кам патне кайнӑ хӑнана?

**Соҫҫим атте**. Арск хулинҭен леш аслӑ кнљаҫ хӗр-арӑм мӑнастирне хӑйӗн аппӑшне пытарнӑ ҫӗре килнӗ тет, унӑн аппӑшӗ иртнӗ каҫ вилсе выртнӑ пулас.

**Ҫерахвим атте**. Еее... пӗркуннех ҭирлӗҭҭӗ ҫав вӑл, укҫа нумай вӗт унӑн...

**Соҫҫим атте**. Укҫалла мар пулсан ӑна пытарма елхерейсем пымӗҫ ӗнтӗ, 80 пин тенкӗ укҫа сахал мар...

**Çерахвим атте**. Неушели 80 пин тенкех пулнă?

**Соççим атте**. Çапла теççĕ... Ну кайам-ха, ҫан çапма пуçлани ҫилай пулаĭ.

**Çерахвим атте**. Есĕ ман çинҫен калама ан ман, ҫирлĕ те.

**Соççим атте**. Калăп ăна, мана йывăр мар (тухса кайаĭ).

## 3-МĔШ КУРĂННИ.

**Çерахвим атте**. (сĕтел хушшине лараĭ) Ку Наташшă те килет ĕнтĕ пайан?.. Миĭĭă та ĕнтĕ тинех илсе килет лешсене. Архимантрит хĕр-арăм мăнастирне кайнăскер Наташшă та килсе çитĕ-ха тен. Хура кĕпе-йĕмсем те нумайланҫĕç-ха, парса йараттăм вара çума. Пайан пите те çуман вĕт-ха кайса çăвас пулĕ. (Пукан çинҫен тăрса краваĭ патнелле утса кайаĭ, çав вăхăтрах алăк хыçĕнҫе хĕр-арăм сасси („П и р ĕ н т у р ă ç ы р л а х п и р е! т е с е к ă ш к ă р н и и л т ĕ н е т).

**Çерахвим атте**. (Наташăна сассинҫен палласа краваĭ çине ларса). Амин!.. çырлахас çырлахас... кĕр ҫасрах!.. ха, ха, ха!!! Сан çинҫен анҫах шухăшласа лараттăм...

**Наташă** (кĕрет те тӳрех Çерахвим атте ҫĕрçийĕ çине ҫупса пырса лараĭ; ҫуптăваççĕ) Ĕнерех килес тенĕҫҫĕ те Арскри кҥаçăн аппăшĕ вилме тапратрĕ, мана ун паҫĕнҫе тăма хушрĕç; халĕ вилнĕ ĕнтĕ вăл.

**Çерахвим атте**. Вилин тата, çав çĕрнĕ карҫăкăн тахăçанах вилес пулаĭ, унăн укçи пире тивес çук вĕт...

**Наташă**. (Çерахвим атте ҫĕрçийĕ çинҫен тăрса краваĭ çине ларса). Вăл çĕрмĕ, çылăхсăр çын çĕрместĭ, теççĕ вĕт-ха?

**Çерахвим атте.** А есĕ вăл çылăхлипе çылăхсăррине ăçтан пĕлме пултаратăн, унăн çамки çине, çырман вĕт вăл çылăхсăр тесе.

**Наташă.** А елхерейсем каçарнă вĕт унăн çылăхне? Çитменнине тата вăл мăнастире укçа нумай панă, халĕ хăйĕнҫен те 80 пин йулнă, теççĕ; пире 3 шер тенкĕ паҫĕç... Ăна ĕнтĕ малашне Мускава ăсăтмалла теççĕ; унăн ӳҫĕ çĕрес çук теççĕ...

**Çерахвим атте.** Ха, ха-ха! Паллах çĕрес çукки...

**Наташă.** Ма... ма... мĕншĕн кулатăн есĕ?

**Çерахвим атте.** Ху култаратăн та...

**Наташă.** Мĕн кулмалли пур унта?

**Çерахвим атте** (пăртак тăрсан). Вăл çĕрес çук пулсан вилсен есĕ те çĕрместĕн еппин.

**Наташă.** Ма каларăн есĕ ăна? Пирĕн пек çылăхлă çын çĕрмерĕ пулаĭ вара.

**Çерахвим атте.** Есĕ ма каларăн, тетĕн. Пĕлетĕн-и ха есĕ мăнастире кĕреҫҫен вăл мĕнле пурĕннине?

**Наташă.** Кам пĕлет, темле пурăннă?

**Çерахвим атте.** Кам мар епĕ те пĕлетĕп. Каласа кăтартам-и сана?

**Наташă.** Каласа пар-ха еппин... Айта сĕтел хушшине кайса ларар?

**Çерахвим атте.** Айта еппин (пĕрин хыçĕнҫен тепри тăрса кайаççĕ те сĕтел хушшине хире хирĕç лараççĕ).

**Наташă.** Ну, каласа пар-ха унăн пурăнаçĕ çинҫен.

**Çерахвим атте** (перускă туртса йараĭ). А мĕн каласси... Ĕлĕк вăл Арск хулинҫе пĕр студенсăпа пурăннă, кайран студентси пăрахнă та вара

вăл мăнастире кĕнĕ: каҫа кайас—никам та илес ҫук... Есĕ те вĕт каҫҫа кайайман пирки мăнастире кĕнĕ?

**Наташă**. Мана ҫав Кушлавăн мăнастирĕнҫи пĕр манашкă хăй патне ҫĕнҫĕ те, каймарăм. Унта малтан пĕр 6—7 ҫул тыра вырса тата ҫавăн пек йăвăр ĕҫсем туса пурăнас пулаť, терĕҫ те, вара пĕр-пĕр хулари мăнастире кĕрсен авантарах пулĕ, терĕм.

**Ҫерахвим атте**. Ăҫта вăл Кушлавăш мăнастирĕ, хапăс мăнастирне калатăн-и есĕ?

**Наташă**. Хапăсĕ вăл те унталла, Уравăш йалĕ 4 ҫухрăм анҫах унтан, ăна пĕлетĕп епĕ.

**Ҫерахвим атте**. А-а-а, вăл мăнастире калаť иккен. Пирĕн йенҫисем хапăс мăнастирĕ теҫҫĕ ăна. Ҫав мăнастирти ҫăлтан... (пусăран) хăш ҫултаҫҫĕха?.. е-е-е... пĕлтĕр анҫах вĕт-ха... 4 аҫа туртса кăларнă тет.

**Наташă**. Ҫапла теҫҫĕ ҫав, вăл ĕҫ ҫăнахах пулнă тет (кĕритурта ура сасси илтĕнет, икĕш те йăлт йăлт пăхкалаҫҫĕ).

**Ҫерахвим атте**. Кунта килет пулмалла...

**Наташă**. Ах, турă! Ăҫта пытанас-ши манăн? (Алăк патĕнҫе „пирĕн турă ҫырлах пире“ тесе кăшкăраť).

**Ҫерахвим атте** (Наташăна) Кĕрсе кай ҫасрах краваť айне! (алăк патĕнҫине калаť). Ей, есĕ кăшт тăхта-ха! (Наташине) Ну есĕ шăпах вырт, унта хăмла пур, хăмла мишукĕ ҫине пуҫна хур... (Алăк хыҫĕнҫине) Ну ĕнтĕ кĕрех! (Павăл, хăйусăр аҫа; ҫăваш, мăнастире анҫах кĕнĕскер, кĕрет).

## 4-МĔШ КУРАННИ.

**Çерахвим атте.** Мĕн кирлĕ сана?

**Павăл.** Архимантрит сире ҫиркӳве пыма каларĕ.

**Çерахвим атте** (тĕлĕнсе). Ҫиркӳве?.. Архимантрит кайнă вĕт-ха?

**Павăл.** Ирхи кĕлĕрен тухсан тин кайаҫ, тет.

**Çерахвим атте.** Архимантриҫĕ хăй ҫиркӳре-и?

**Павăл.** Епĕ курман ăна, ҫиркӳрех пулĕ.

**Çерахвим атте.** Кам йаҫĕ сана мана ҫĕнме?

**Павăл.** Лешĕ, сулахай йенҫи клирăсра йурлакан ват манах ҫĕнсе килме хушрĕ.

**Çерахвим атте.** Оттес Иоççив пулĕ-ха вăл... Ну епĕ халех пырăп. (тумлана пуçлаҫ, Павăлĕ алăк патĕнҫе тăраҫ).

**Наташă.** (Павăлĕ тухса кайнă пулĕ тесе, пуçне краваҫ айĕнҫен кăларса). Аҫăхху! аҫăхху! аҫăхху!

**Павăл** (хăранипе). Ай, ай!!! (такăнса алăк урлă ҫăсăлса ӳкет те тăраҫ, Çерахвим атте вилес, пек кулаҫ).

**Çерахвим атте** (кулса). Мĕн пуҫҫĕ сана?

**Павăл.** Темскер пуҫҫĕ вăл сан краваҫ айĕнҫе? Кам вăл?

**Çерахвим атте.** Леш пӳлĕмре пулмалла вăл...

**Павăл.** Леш пӳлĕмре мар-ха, сан краваҫ айĕнҫен темле хураскер, шĕвĕр пуçлăскер тухма тапратрĕ, вилсех карăм хăраса (Çерахвим атте вилес пек кулаҫ).

**Çерахвим атте.** Çапла çав аҫам пирĕн мăнастиртте... Çак мăнастир вырăнĕ ĕлĕк, авал çĕлен йави пулнă ҫеҫ, çавăнпа та çĕленсем кунта, çĕр айĕнҫе халĕ те пур, теççĕ.

**Павăл.** Тĕрĕсмар пулĕ... Ăçтан пулаҫ.

**Çерахвим атте.** Ак тата! Суйаӗ, тетӗн-и мӗн! Пурӑнса пӑх-ха, вара курӑн мӗнле килкартинҫе çӗленсем йашӑлтатса çӳренине; çитменнине тата пурте хура, тискер çӗленсем. Вӑн пӗр çӗленӗ пирӗн пӳлӗм тӗлӗнҫе пурӑнаӗ те, çавӑн пек кӑшкӑрса хӑратаӗ. Епир хуӗ вӗреннӗ. Хӑрамастпӑр. Анҫах есӗ пайтах тӑсӑла тӑсӑла ӳкӗн-ха алӑк урлӑ.

**Павӑл.** Кӑна пӗлнӗ пулсан кӗрес те пулмасҫӗ ман мӑнастире.

**Çерахвим атте.** Ну ниҫҫаво, ытла хӑрушах пулҫмӗ (тумланса пӗтереӗ). Айта, кайпӑр, (тухса кайаççӗ).

## 5-МӖШ КУРӐННИ.

**Наташӑ** (краваӗ айӗнҫен тухаӗ, кулаӗ, куç кӗски умне пырса йусанаӗ). Кунта выртса хырӑм та выçса кайрӗ, мӗнте пулин пур-ши кун çимеллӗ? (шкапа уçса пӑхаӗ. Ак, ак, ак! Кулаҫ та пур... Тата кӗленҫери мӗн йапала-ши ку? (тутанса пӑхаӗ). Ерех ку. Тем, те пулӗ унӑн. (Кулаҫне илсе, шкапне хупса сӗтел хушшине кӗрсе лараӗ, кулаҫне сӗтел çине хурса шухӑша кайаӗ). Тен йуратнӑ хӗрӗ те урӑх и ха унӑн, кам пӗлет?! Мана кӗпи йӗмӗсене çутарасшӑн илӗртсе пурӑнаӗ те, кайран вилес пек кулаӗ пулӗ вӑл мантан. Мӑнастиртен тухап, тухап тет те, тухса та ыррине курма çук. Килте пурӑнас пулсан унӑн халӗ мантан килçурт çаврас пулаӗ, лаши те ӗни те пурте кирлӗ пулаӗ, çитменнине тата вӑрмана кайса тертленсе çӳрес пулаӗ; тырӑ акас, вырас пулаӗ, пурте ху çинҫе. А кунта мӗн? Акӑ епӗ пурӑнатӑп: хирӑм тутӑ, çи питӗ, кунне пӗр иккӗ ҫиркӳве кайса килетӗн те урӑх ӗçӳ те çук. Каç

пулсан урắх тумтир тắхắнатắн та, хапха айĕнҫен те пулин тухса хулана кайса ҫӳретĕн, унтан вунă хут лайắх ҫынсемпе кулет тắватắн (кулкалаҫ). Спаски мắнастирте сахал-и маншắн ҫамрắксем, вĕсем пирĕн мắнастир хыҫĕнҫе ҫӳремесĕр пĕр кун та ирттермеҫҫĕ. (Алắк патĕнҫе ура сасси илтĕнет, Наташă хắранипе краваҫ айне кĕрсе кайаҫ). (Ҫерахвим атте кĕрет).

**Ҫерахвим атте** (тавралла пắхкаласа). Ку ắҫта кайнă (краваҫ айне пắхаҫ). Ҫе! Есĕ паҫắртанпах выртатắн-и?

**Наташă** (тухса). Хаљ анҫах кĕрсе пытантắм урắх ҫын килет пулĕ тесе.

**Ҫерахвим атте**. Питĕрес пулаҫҫĕ епĕ кайсан. Кулаҫне тата ма ҫимерĕн?

**Наташă**. Каҫар ĕнтĕ илнĕшĕн? Ҫийес терĕм те темле йавắр шухắшсем пуҫа килсе кĕҫĕҫ.

**Ҫерахвим атте** (саланаҫ). Ма тата апла?

**Наташă**. Архимантрит мĕн терĕ?

**Ҫерахвим атте**. Архимантриҫĕ тахҫанах кайнă сирĕн пата. А хắйамат, пĕр усал ҫắваш аҫине суйма йанă та ман пата...

**Наташă** (Ҫерахвим сĕтел хушшине пырса лараҫ). Пурте сан пекех суйаҫҫĕ иккен сирĕн. Есĕ те мана пĕрмайах суйса пурắнатắн, ҫитменнине тата пайан санран ҫĕлен йатне илтмелле пулљҫĕ.

**Ҫерахвим атте**. Ҫавắнпắн ҫиллентĕн-и вара? Епĕ ắна ахаљ, выљатса кắна каларắм вĕт. Наташă ҫилленмест вắл! (Сĕтел урлă кармашса Наташắна тытса лắкаҫ).

**Наташă**. Кай! пắшшал! Ан мắшкắласа лар!

**Ҫерахвим атте** (кắмắлсắр пулса). Ҫắнах та ҫилленнĕ иккен. А епĕ пайан савắнаҫлă кун пулаҫ, улах тắвас тесе тắратắп.

**Наташă.** Теме курса савăнмалла таках!..

**Çерахвим атте.** Архимантрит кайни пирĕншĕн савăнăç мар-и вара?

**Наташă.** Епĕ кайатăп та архимантрита калатăп...

**Çерахвим атте** (тĕлĕнсе). Ђе-ђе-ђе! Ђипер калаç-ха есĕ! Мĕн тесе калăн вара архимантрита?

**Наташă.** Ĕçеççĕ, тетĕп.

**Çерахвим атте.** Темле урлă пирлĕ калаçа пуçларăн ĕçке ха есĕ?! Кам ĕçет?

**Наташă.** Камăн ерех пур çав ĕçĕ.

**Çерахвим атте.** А-а-а! Вăл ерех çинђен калаĭ иккен... Унпала нумайах ĕçкĕ тăваймăн. Ăна епĕ кăтартмастăп та шкапрах лартăр.

**Наташă.** Вăл çитмесен урăх та пулĕ-ха, унсăр пуçне хăмла та пур-ха, ăна та ахалех, краваĭ айĕнђе усрама кăна илмен пулĕ. Ђыхăнтарса ђуттах вĕлеређђĕ мур хăмли, кунта çылăха кĕрсе пĕтес пулаĭ сирĕн патра.

**Çерахвим атте.** Ай-йай çылăхсăр çын. Ăçта, краваĭ айĕнђе ађăххулатса каçартăн-и çылăхна, йе спаски мăнастир хыçĕнђе-и? (иккĕш те кулса йараççĕ). Е-е-е, хĕвел пăха пуçларĕ-и?

**Наташă.** Пăхаĭ сана...

**Çерахвим атте.** Сăваплă çын пулсан санăн хĕвел пек çуталса ларас пулаĭ, а есĕ вăн мĕнле... Укçа пуррисем веç çветтуйа та тухаççĕ пулĕ те, пирĕн иксĕмĕрĕн укçасем çук çав. Мăнастирте пурăнакансем пурте çветтуйа туха туха кайĕç-и ха. Çĕр çăттăрах пĕрре. Пирĕн архимантрит та çветтуйа тухас тесе укça пухаĭ пулмалла: хăйне ђĕнмен те, а вăл укçашăн антăхса улпут хĕрне пытарнă çĕре кайнă. Ну есĕ, Наташă, пире ĕçеççĕ, тетĕн ĕнтĕ, анђах есĕ ак çакна ан ман: архимантритсем, елхерейсем пирĕнтен те лайăхрах

ĕçeççĕ, вĕсем тĕрлĕрен хаклă тăракан ерехсем йанклаттараççĕ. Пирĕн архимантрит та ун пеккисенђен ўксех йулмасť. Ун патĕнђен тĕрлĕрен улпут хĕрĕсем туха пĕлмеççĕ. Хăй те мĕнле вĕт вăл... таса... а тата хырăмĕ шуйттанăн... аран йăтса çўрет вĕт. (Наташă кулса йараť).

**Çерахвим атте** (аллисемпе хăлађланса). Ей каллех хĕвел пăхса йађĕ!

**Наташă** (сывласа илсе). Хĕвел пăхасси кађки... çыврас килсе кайрĕ-ха.

**Çерахвим атте.** Вырт краваť çине?!

**Наташă.** Çук, киле кайатăп епĕ.

**Çерахвим атте.** Ăçтаваскатăн, лар-ха? (Алăк патĕнђе ура сасси илтĕнет). Кам мурĕ килет-ши тата...

**Наташă** (хăраса). Ах турă!

**Çерахвим атте.** Наташă! ђасрах, ђăматăн пулĕ краваť айне! (Наташă пытанма ĕлкĕреймесť, Соççим атте кĕрет).

## 6-МĔШ КУРĂННИ.

**Соççим атте** (алăкран кĕнĕ кĕмен). А-а-а!!! Вăн мĕншĕн ђиркўве пыман вăл! (Наташă краваťрен тытса, пуçне усса, пиђĕсене аллипе хупласа тăраť). Айта ха, кĕр Миťťă! Кĕрĕр пурте... кĕрĕр! Вăн кампа лараť вăл! (Миťťăпа икĕ йулташĕ: Микулаппа Хеветĕр кĕреççĕ, Наташăпа Çерахвим атте çине пăхса ахăраççĕ).

**Миťťă.** Вăт Çерахвим атте... вăт манах!..

**Соççим атте.** Наташи епĕ кĕнĕ ђухне краваť айне кĕме хăтланса тăраťђĕ, кĕреймерĕ, епĕ кунта çитсе те тăтăм.

**Ҫерахвим атте** (кулкаласа). Ҫынна ан вăтантарăр ĕнтĕ есир те ҫав... ытла кашкăрсем пек ӳласа кĕтĕр. Апла аван мар йут ҫын умĕнҫе.

**Наташă.** Ма килтĕмех кунта намăс курма.

**Ҫерахвим атте.** Ай ҫипер калаҫсам-и... мĕн намăсĕ пур унта... (Миттă ҫинелле пăхса). А Миттă хăй... хăй патне те сахалах пуҫтарăнмаҫҫĕ хĕрсем, пайан темле кайнă-ха вăл ҫиркӳве. Тепĕр ҫухне вăл хĕрсем хыҫҫăн автан ҫăхсем патне халтăртатса пынă пек талхăрса ҫӳрекенҫҫĕ те-ха... (пурте ахăраҫҫĕ).

**Миттă.** Ҫерахвим аттеренех кайа йулакан марҫҫĕ! (тата кулаҫҫĕ).

**Ҫерахвим атте.** Ну вăл ку иртсе кайтăр, урăх йапала ҫинҫен калаҫас. (Соҫҫим атте ҫинелле пăхса). Кĕлĕрен тухрĕ-и?

**Соҫҫим атте.** Сан пек ҫур кĕлĕрен пăрахса таврăнмастпăр ĕнтĕ. Ну кайас ха, ҫей ĕҫкелес те апат кĕллине каймалла та пулать пулĕ. (Соҫҫим атте тухса кайать).

**Наташă.** Манăн та кайас...

**Ҫерахвим атте.** Лар-ха лар! Ăҫтаваскатăн, ак вăт ҫей ĕҫĕпĕр.

**Микулай** (Ҫерахвим аттерен ҫур саспа ыйтать). Наташă йатлă-и мĕн вăл?

**Ҫерахвим атте.** Наташă та ха темме ларасшăн мар-ха вăл.

**Наташă.** Кайасах пулĕ ҫав, лере кĕтеҫҫĕ пулĕ.

**Миттă.** Еее! Унпа васкать иккен ку. Кĕтекенсем пур еппин сан!

**Наташă.** Ҫук, ҫук!.. Хамăр мăнастирте шыраҫҫĕ пулĕ, тетĕп.

**Миттă**. Хăвăр мăнастире те пыраççĕ пулĕ çав шырама. Аçтан, Спаски мăнастирĕнҫен пыраççĕ-и? (пурте кулаççĕ).

**Наташă**. Кулаççĕ тата есреметсем, сирĕн пекех пулĕ пурте...

**Миттă**. Çиллентересшĕн марҫҫĕ те епĕ сана. Есĕ çилленсех кайрăн çав.

**Наташă**. Çилленмесĕр тата çапла тăрăхласан.

**Çерахвим атте**. Пăрахăр! иртсе кайтăр ĕнтĕ вăл!

**Наташă**. Епĕ çавах кунта йулма пултараймастăп, кайатăп.

**Миттă**. Еее! Ку, аҫам, кунта йуласшăн йуншахласа тăраť иккен. (Кулса йараççĕ). Йулатăн-и?

**Çерахвим атте**. Пăрахăр ĕнтĕ! Аван мар вĕт апла! (Наташă йĕрсе йараť те хăвăрт тухса алăкне шалт хупса хăвараť. Пурте кулса йараççĕ).

**Миттă**. Вăт вĕри çĕлен! (кулаççĕ). Çерахвим атте те тупнă çав нĕрсĕре... Слопотара сахал-и мĕн саншăн мăнтăррисем.

**Çерахвим атте**. Пулĕ те вăл, халлиҫҫен çыхланман. Наташши пҫаваť ха вăл, çăва патне кайтăр, анҫах пайанхи хаклă куна ахалех иртересшĕн мар епĕ. Архимантрит халĕ вăл ырансăр та килмесť.

**Миттă**. Итлĕр-ха?! Кайса килем-и манҫă патне?

**Çерахвим атте**. Айта, йара пар!

**Миттă**. Вăл хăйпе пĕрле Панҫăна та илсе килĕ, вара çитрĕ те пире! Малтан ĕçтерсе ўсĕртетпĕр те... (пурте кулаççĕ).

**Çерахвим атте**. Есĕ каланă пек пулсан питĕ пырăҫҫĕ те вăл, халех килмĕç çав вĕсем. (Миттă кулса йараť).

**Çерахвим атте**. Ма кулатăн?!

**Миттӑ**. Кулмасӑр тата, ху куралаттӑн та. Халех илсе килесшӗн калаççӗ-и вара сана! Халь кун çутинче йепле илсе килен! Вара каçпала килӗç ӗнтӗ вӗсем, килес тесен.

**Çерахвим атте**. Апла пулсан халех кайса калас пулать вӗсене, хамӑрӑн та мӗн хатӗрленмеллине хатӗрленес пулать. (Перускӑ туртса йарать).

**Миттӑ**. Çавна калатӑп çав епӗ те. Апат кӗллине кайса пӗтчӗр те вара кайса килӗп епӗ. (Хӑйӗн икӗ йулташӗсем çине пӑхса). Ну, есир тата. Микулай, Хветӗр! Мӗн пӗр сӑмах та чӗнмесӗр ларатӑр? (Çерахвим атте çинелле пӑхса, аллисене йулташӗсем йеннелле чӑсса). Пӑх-ха есӗ вӗсем çине?! Паçӑртанпа шӑпӑрт лараççӗ, шпийун пуласшӑн мар-и ха вӗсем. Çӗр çӑттӑрах пӗрре!

**Микулай**. Çӗр çӑтсассӑн улах тӑвасси çитрӗ вара... Епир те шухӑша кайнӑччӗ те-ха...

**Миттӑ**. Мӗнле шухӑша кайнӑ есир?

**Хӗветӗр**. (Микулай йеннемле пӑхса). Калас-и Микулай?

**Микулай**. Айта кала...

**Хӗветӗр**. Пире хӑвӑр компанине кӗртес тесен епир те хамӑр хӗрсене илсе килес тетпӗр.

**Миттӑ**. Ӑçта вӗсем, инçе-и?

**Хӗветӗр**. Инçе мар, кунта, слопотара.

**Миттӑ**. Е-е-е! Апла пулсан!.. Ак йапала!.. Пӗр май килнӗ чухне май килсех пырать вӑл. (Хӗветӗртен ыйтать). Самӑр-и хӑйсем?

**Хӗветӗр**. Сан Маньӑран кайах мар, матуртарах пулмасан...

**Миттӑ**. Маньӑна паллатӑн-и-ха есӗ?

**Хӗветӗр**. Палламасӑр тата... Пӗркунне хӑвӑн келийуна калта пек йавкаланса кӗрсе кайрӗ. (Кулаççӗ).

**Миттӑ**. (Тӑраҫ, уткаласа ҫӳрет). Курнӑ иккен. Еееҳ, Маҫӑ! Пуштӑри ҫинавник хӗрӗ вӗт вӑл. (Сӗтел ҫинҫен пӗр кӗнеке илет). Апостол вулас-ха. Ҫерахвим атте пек кӑларса пулӗ-и сасса. (Кӗнекине Апостол вуланӑ ҫухнехи пек тытаҫ). Ҫерахвим атте Наташӑ патне ҫырнӑ сӑмахсене вуламалла-а-а!!! (Пурте кулаҫҫӗ, „хулленрех" теҫҫӗ).

**Микулай**. Итлесе тӑрӑр!!!

**Миттӑ**. Ей, Наташӑ!!! Пирӗн пайан улах пулмалла-а-а!

**Ҫерахвим атте** (сиксе тӑрса). Мур пуҫӗ ман ҫырува вуламасҫ и-ха вӑл?! (ҫупса пыраҫ, Митти кӗнекине хупса тараҫ).

**Ҫерахвим атте**. Тавай, тавай ҫырува!

**Миттӑ** (ыттисене). Килӗр, килӗр! Уйӑрса йарӑр манран! Наташӑ патне ҫырнӑ ҫырувӗ пур. (Лешсем ҫупса пыраҫҫӗ, тӗркӗшсе кайаҫҫӗ).

**Ҫерахвим атте**. Йарӑр мурсем!!! Кӗнекене ҫӗмӗретӗр!

**Миттӑ**. Тытӑр, тытӑр, лайӑхрах!

**Микулай**. Ну ҫитӗ-ҫке ӗнтӗ... (пӑрахаҫҫӗ).

**Миттӑ**. Ах мур, вулаймарӑм.

**Микулай**. Кайран ак вӑл хӑйех вуласа параҫ, хӑнасем пуҫтарӑнҫҫӑр тулӗк.

**Ҫерахвим атте** (кӗнекине хураҫ, сӗтел хушшине лараҫ, ун хыҫҫӑн пурте лараҫҫӗ). Ҫӑнах тавайха хатӗрленер, тен мӗн те пулсан тухӗ.

**Миттӑ**. Тавай, тавай! Мӗн тумалла?

**Ҫерахвим атте**. Мӗн тӑвасси паллах ӗнтӗ вӑл: пӗр краваҫ илсе килес пулаҫ. Микулайӑн ку пӳртрех куҫарас ӑна кунта. Унтан тата пулкӑсем, ерехсем хатӗрлес пулаҫ.

**Микулай**. Мӗн тума илсе килмелле ман краваҫа?

**Çерахвим атте.** Ак тăрри! (кулаççĕ). Мĕн тума илсе килес пулаҥ тет, а хăй хĕрсем килеççĕ, тет.

**Микулай.** Çапла пулĕ тесе шухăшларăм та малтан, тата апла та мар-и тен терĕм те çавăнпа ыйтрăм. Айта еппин. Хĕветĕр, кайса йатса килер. (Хĕветĕрпе Микулай тухса кайаççĕ).

**Çерахвим атте** (ура çине тăрса уткаласа, тавралла пăхкаласа), Аçта лартăпăр-ха вăл кравата? Хамăнни çумнех лартас пулĕ-и?

**Миҥҥă.** Йунашар лартас пулаҥ, ăçта лартмалла тата. Манăн лавкана кайса килес пулĕ-ха.

**Çерахвим атте.** Кайăн-ха... Апат кĕллине кĕмен вĕт-ха. Кайсан есĕ Маҥă патне кĕрсе тух ĕнтĕ. Маҥăна та илсе килес пулаҥ. (Алăк патĕнҫе кăптăртатни илтĕнет).

**Микулай.** Уçăр!

**Çерахвим атте.** Çиҫҫас! (Алăк патнелле таллаттарса ҫупса пырса уçаҥ). Айта, кĕрĕр!.. çўлерех çĕкле... вăн çавăнта, хамăннипе йунашар лартăр.

**Миҥҥă.** Лайăхрах утийал илсе килесҫĕ, ку ытла сăнсăр.

**Çерахвим атте.** Пыра-а-аҥ! Пĕр ўсĕрĕлсессĕн сăнлипе сăнсăррине мĕн пĕлеççĕ вĕсем! (кулаççĕ).

**Микулай.** Ну тата урăх мĕн тумалла!

**Хĕветĕр.** Мĕн тумаллине ыйтса ан тăр-ха есĕ, хăйсем те пĕлĕç (апат кĕллине ҫан çапса йараҥ).

**Миҥҥă.** Акă, ҫанĕ те çапса йаҫĕ, çавна кĕтни йулнăҫҫĕ-ха. Ну, Микулай, епир иксĕмĕр лавкана кайăпăр, сана йапаласем илсе парăп та, хам Маҥă патне кĕрсе йулăп.

**Микулай.** Çапла пулмасăр!.. Есĕ вара Маҥă патне кĕрейсе йулатăн пулаҥ, питĕ ҫейе калаçатăн!

**Миҥҥă.** Мĕн ҫейи пур унта! Тата мĕнле тăвас еппин.

**Микулай.** Иурă-çке, йурĕ... кайăпăр... ҫиркӳве кайса пĕҫҫĕр-ха...

**Хĕветĕр.** Манăн та киле кайса килес-ха, хырăм выçрĕ.

**Çерахвим атте.** Есĕ унта мутри!.. Никама та каласа ан çурĕ!

**Хĕветĕр.** Çук, çук! (Алăк патĕнҫе ура сасси илтĕнет).

**Павăл.** Пирĕн турă çырлах пирее!

Пурте: (пĕрин хыççăн тепĕри). Аминҫ! Аминҫ! Аминҫ! (Павăл кĕрет).

## 7-МĔШ КУРĂННИ.

**Павăл** (Миттă çине пăхса). Çавăнта мăнастир хыçĕнҫе сирĕн аппу уткаласа çӳрет, вăл сире тухтăр, терĕ.

**Миттă** (тĕлĕнсе). Мĕнле аппа?..

**Павăл.** Миттăн аппăшĕ пулап епĕ, терĕ вăл. (Кулаççĕ).

**Микулай.** Манҫă пулмалла вăл.

**Миттă** (хĕпĕртесе). Ҫăнах та вĕт! (тăпăр-тăпар сиккелесе илет, хăйĕн шĕвĕр çĕлĕкне тăхăнат, куç кĕски çине пырса пăхат, Павăл тухса кайат).

**Çерахвим атте** (Миттă патне пырса). Илсе килнĕ ҫух масар виттĕр илсе кил, асту, ыттисем ан курҫăр...

**Миттă.** Ну, кураççĕ тата!.. Епĕ кайрăм! (ҫупса тухса кайат).

**Çерахвим атте.** Урнă пулĕ ку...

**Хĕветĕр.** Манăн та кайас пулĕ ĕнтĕ. Нумай тăмăп епĕ килĕп.

**Çерахвим атте.** Санăн паçрах кайса килмеллеҫҫĕ.

**Хӗветӗр.** Ђиркӳрен тухнӑ ҫӗре ӗлкӗретӗп ӗнтӗ епӗ. Каҫђен ӗҫме тытӑнмастпӑр вӗт-ха (тухса кайаӗ. Микулай уткаласа ҫӳрет, Ҫерахвим атте сӗтел патӗнђе кӗнекесем тыткаласа пӑхса тӑраӗ.

**Микулай.** Оттес Ҫерахвим!

**Ҫерахвим атте.** Еув!

**Микулай.** Хӑҫан пулатӑн-ха есӗ тешурнӑй тийаккӑн?

**Ҫерахвим атте.** Ыран пулмалла та... Каймастӑп епӗ, пӗр-пӗр сӑлтав каллех те тупӑп-ха. Темле вӑл ман ҫак уйӑх хушшинђе ђиркӳве пӗрре те кайас килми пуђђӗ. Шухӑшлатӑн, шухӑшлатӑн та шалтах ӑнтан кайатӑн (уткалама тытӑнаӗ). Ҫакӑнти пурӑнӑҫ пурӑнӑҫ-и вӑл? Пӑхха есӗ хулари урамсене тухса? Мӗн тӗрлӗ халӑх ҫӳрет унта... Мӗн тӗрлӗ майрасем... Епир мӗн? Пире халӗ архимантритрен ыйтмасӑр мунђана та кайма йурамасӗ, а хӑй архимантриђӗ хӑнана кайсан ҫӗрӗ ҫӗрӗпе кунӗ кунӗпе таварӑнмасӑр пурӑнаӗ. Пурӑнатпӑр ҫав хамӑрта тӗрмери пек. Шуйттан мӑнастирӗн ҫунса кайас пулаӗ те унӑн, вара укҫине ҫаратса тухса кайма та пулӗђђӗ (ђан ҫапса ђарӑнаӗ).

**Микулай.** Ну-у-у, оттес Ҫерахвим! Пирӗншӗн те мункун ҫитӗ-ха, Ак вӑт хӗрсем те килӗҫ. Епир те архимантритрен ӳксех йулмӑпӑр-ха. (Ҫерахвим атте хуллен турӑ йурри йурласа уткаласа ҫӳрет). Миӗӗӑ таҫта кайса пӑђланђӗ-ха пирӗн. Ну, оттес Ҫерахвим, пӗркуннехи пек мӗкӗрсе кӑтарт-ха?

**Ҫерахвим атте**, Мӗкӗрме вӑкӑр-и мӗн епӗ?

**Микулай** (кулса). Вӑкӑр мар та, сассу ытла хулӑмран калатӑп. Мӑнастире кӗнӗ кунах ђиркӳве кайсассӑн епӗ есӗ слушит тунине куртӑм та, сана епӗ таҫти сопортан килнӗ архитийаккӑн, тесе.

(Çерахвим атте апла каласан хĕпĕртесе кайаӗ, унтан пĕр вырăна тăраӗ те мăнă саспа (паспа) кăшкăрса йараӗ.

**Çерахвим атте**. Миром Господу помолимся!

**Микулай**. Господи помилуй!

**Çерахвим атте**. О свышнем мире и о спасении душ наших господу помолимся!

**Микулай**. Господи помилуй!

**Миттă** (Алăк патĕнҫе итлесе тăнăскер, келйана кĕнĕ кĕмен тенăрпа кăшкăрса йараӗ). О всечеснейшем отце нашем Серафиме Зилантовском Чудотворце господу помолимся!!!

**Пурте**. Господи помилуй! (виçĕ хут йурласа йараççĕ те ахăрма тытăнаççĕ).

**Микулай**. Ну, Миттă! Маҥҙă килет-и ха?

**Миттă**. Килет, килет, ҙĕнме кайрĕ. Халех килсе те çитеççĕ пулĕ ĕнтĕ вĕсем. (Хĕпĕртенипе пурте ай, ай к ă ш к ă р с а с и к к е л е м е п у ç л а ç ç ĕ. Миттăпа Çерахвим атте нимĕн тăвайманнипе икĕш тытăçса краваӗ çине йăваланса кайаççĕ. Çав вăхăтрах алăк патĕнҫе шакканни илтĕнет. Пурте краваӗ çинҫен сиксе тăрса алăк патнелле пăхаççĕ).

**Миттă** (ыттисене). Лешсем! (Шаккаканнисене). Кĕрĕр; кĕрĕр! (Маҥҙăпа Таҥҙă кĕреççĕ).

## 8-МĔШ КУРĂННИ.

**Маҥҙă**. Сывă-и-ха?

**Миттă**. Килĕрех, килĕрех... Акă ку пирĕн мăнастирти ҙи аслă тийаккăн, отес Çерахвим... Паллашăр... (паллашаççĕ пуринпе те).

**Маҥҙă**. Ак ку ман, йулташ, Таҥҙă... Паллашăр... (пурте паллашаççĕ, хĕрĕсем патĕнҫе шăлăнкаласа

çӳреççĕ. Çерахвим атте кравачӗ çинҫи утийаљне йусама пăрăначӗ; Миттă ыттисене сĕтел хушшине лартса хăй Маҫă çумне пырса ларачӗ, унтан Çерахвим атте Таҫă çумне пырса ларачӗ; ҫан вĕтти шаккипе çапса йарачӗ).

**Çерахвим атте** (Таҫăна). Таçта курнă пек астăватăп епĕ сире... (перускă туртса йарачӗ).

**Таҫă**. Курнă пулĕ, епир кунта, сирĕн масар хыçĕнҫе йаланах пулатпăр. Епĕ те сире ҫиркӳре кашни вырсарни кунах куратăп. Сирĕн сас пит хулăм).

**Çерахвим атте** (сассине халиҫҫенхинҫен айаларах илсе). Микулай сăмавар ларт-ха? Пирĕн хуçайккăсем çук вĕт, хамăрăнах тăвас пулачӗ.

**Микулай**. Халех лартăп.

**Маҫă**. Пирĕншĕн пулсан ан та ҫăрманăр, епир хасăр кайатпăр. Кунта епир ҫиркӳве килмелле кĕнĕҫҫĕ.

**Çерахвим атте**. Сирĕншĕн анҫах мар, хамăр та халĕ пайан йерĕçеймен ҫей ĕçме.

**Таҫă**. Мĕн турăр йерĕçмесĕр?

**Çерахвим атте**. Хатĕрлентĕмĕр. Пайан манăн именинник вĕт.

**Таҫă**. А-а! Вăн йепле иккен! С анкелăм еппин!

**Çерахвим атте**. Çпаççипă. (Ыттисем кулаççĕ).

**Микулай**. Айăр ăна урра çĕклетпĕр!

**Пурте**. Айăр! айăр! айăр! (сĕтел хушшинҫен тухаççĕ, тĕркĕшеççĕ, Çерахвим аттене сырса илеççĕ. Çав вăхăтрах кĕритурта каптăртатни илтĕнет, пурте ҫаранса итлесе тăраççĕ).

**Миттă** (хĕрĕсене). Пытанăр ҫасрах кравачӗ айне! (хĕрĕсем хăранипе кравачӗ айне хăшăлтатса кĕрсе кайаççĕ). Иоан атте керечӗ.

**Алăк хыçĕнҫе**. Пирĕн турă çырлах пире!

**Миттă**. Амин! (Иоан атте кĕрет).

**Çерахвим атте**. Çак Иоан атте пирĕн пата пĕрре те вăхăта пĕлсе килмест.

**Иоан атте**. Ирĕксĕрех çӳрес пулат. Ҫиркӳве пымастăр та... Архимантрит кайнă тесе туй тăвас теттĕр пулĕ. Ҫиркӳве те пымаççĕ, кĕлĕ пуçланҫĕ вĕт.

**Çерахвим атте**. Пынисем çитмеççĕ-и сана? Мĕн тăватăн есĕ пирĕнпеле?

**Иоан атте**. А кам йурлат сулахай йенҫи клирăсра. Çу сĕрмен урапа пек хайкăлтатса тăраççĕ унта... Хут мĕн тăвăр епĕ сире пĕрре калатă. (Тухса кайат).

**Çерахвим атте** (Иоан атте тухса кайнă майĕпе урине лаша пек тапса йарса). Кай çăва патне! (пурте ахăраççĕ).

**Миттă** (Маңҫăпа Таңҫăна). Тухăр ĕнтĕ! (лешсем йăшăлтатса тухаççĕ, ахăраççĕ). Хăйамат старикне такам илсе килҫĕ?

**Маңҫă** (хашт сывлат). Кайас ĕнтĕ, сире те аван мар.

**Миттă**. Ăçта васкатăр? Ларăр-ха, ҫей ĕçĕпĕр,

**Микулай**. Оттес Çерахвиме пирĕн урра çĕклемеллеҫҫĕ вĕт-ха, манса кайрăр-и мĕн?

**Пурте**. Е-е-е, ҫăнах! Атăр! Атăр! Атăр! (сырса илеççĕ). Урра! урра! урра! (ахăраççĕ).

**Çерахвим атте**. Ну ĕнтĕ халĕ Маңҫăна çĕклĕпĕр, унтан Таңҫăна...

**Миттă**. Маңҫăна епĕ ăна пĕҫҫен те... (Миттă Маңҫă патне аллисемпе хăлаҫланса). Урра (кăшкăрса пырат те Маңҫăна ыталаса илсе кроват çине ӳкерет. Çерахвим атте Таңҫăна ӳкерет; пурте тĕркешсе кайаççĕ, кăшкăрашаççĕ, Микулай нимĕн тума аптăраса вĕсен çумĕнҫе сĕртĕнкелесе çӳрет).

**Çерахвим атте** (криваҭ çинҫен тӑрса). Айтӑр, тӑрӑр! тавай пуштӑлла выҫатпӑр?

**Миҭҭӑ**. Айтӑр, ларӑр! (Çерахвим атте шкапран хут илет).

**Маҥҫӑ**. Епир кайас тетпӗр. Таҥҫӑ та кайас тет.

**Çерахвим атте**. Епир сире ҫей ӗçтерсе йарасшӑнҫҫӗ, темшӗн ларасшӑн мар-ха есир? Еппин вара каçпала килӗр? Манӑн пайан именинник вӗт...

**Маҥҫӑ**. Каçпала килӗпӗр иксӗмӗр те. Тата манӑн тепӗр йулташ пур, ӑна илсе килме йураҭ-и?

**Пурте**: йураҭ, йураҭ!.. (Маҥҫӑпа Таҥҫӑ пӗрин хыççӑн тепри куç-кӗски çине пырса пӑхаççӗ).

**Маҥҫӑ**. Сывӑ пулӑр! (тухса кайаççӗ).

**Пурте**: Сывӑ пулӑр! сывӑ пулӑр! (Йӑкӑлт йӑкӑлт сиккелесе илеççӗ: Çерахвим атте ҫупса пырса Миҭҭӑ ӗнси çине утланса ларма тытӑнаҭ „ах лараймарӑм“ тет, унтан Микулай Çерахвим атте патне ҫупса пырса утланса лараҭ, Çерахвим атте йури кайса ӳксе лешне йӑвантарса йараҭ (пурте ахӑраççӗ).

(Ҫ а р ш а в).

## II-МĔШ ПАЙĔ.

Çерахвим аттен пӳлĕмĕ. Пӳлĕмри йапаласем паçăрхисемех; сылтăм йенђи пĕрене çумĕнђе Çерахвим аттен камилавки çакăнса тăрат. Выђакансем: Çерахвим атте, Миттă, Микулай, Маңђă, Таңђă, сĕтел хушшинђе пулккăсемпе, сахăрпа ђей ĕçсе, пурте темскер çинђен калаçса кулса лараççĕ.

**Çерахвим атте.** Таңђă, кӳр тултарса парам? (Таңђă ђей ђашăккине сăмавар патне лартса парат).

**Миттă.** Маңђăна та тултарса пар!

**Çерахвим атте.** Тавай кунталла? Пурне те тултарса парăп, ђей йăлăхтарђĕ пулсан урăххи те пулĕ ха пирĕн... (Миттă йеннелле пăхса куçĕсене мăђ-мăђ хупат).

**Микулай.** Пĕр тултарма ăннăскер маната тултарса пар ĕнтĕ.

**Çерахвим атте.** Тавай тултарса параси. Ĕç, ĕç Микулай. (Çерахвим атти хăй лĕрп тултарса сыпат, унтан вара Таңђă валли тепĕр ђашкă тултарат.

**Микулай.** (Маңђăна, Миттă урлă, çурăмĕнђен çат çапса). Çав оттес Çерахвимăн алхасассийех пĕтмĕ унăн... (Маңђă Çерахвим аттене çурăмĕнђен кӳп тутарат те пурте вилесп ек кулма тытăнаççĕ).

**Çерахвим атте.** Ђе-ђе-ђе! Мĕншĕн пуљђĕ ку? Ђейне ĕçсе йатăн-имĕн. Тавай, тавай тултарса парăп, хĕнемесĕрех?

**Маңђă.** (кулса). Е-е-е, çапла пулĕ çав, хăй малтан тĕрткелесе лараĭ те...

**Çерахвим атте.** Тупăта туршăнта епĕ мар! (Микулай вăл вăхăтра вăрттăн кулса ларай). Вăн çав упăте тĕртрĕ пулмалла, куратăн-и мĕнле кулса ларай? (Çав вăхăтрах Микулай саспа кулса йараĭ. Маңђă „еле лекрĕн-и“ тесе ун паĭне пыма тăраĭ).

**Миттă.** (Маңђăна) Ăçта кайан, ăçта? (Манине пилĕкĕнђен ыталаса илет).

**Маңђă.** Каймастăп-çке...

**Микулай.** Ак тата, Митти Маңђăна вырăнтан та тапратасшăн мар...

**Миттă.** Вырăнтан тапратас мар тесе епĕ ăна пукан çумне пăталас лартман вĕт. Хăйех каларĕ вĕт каймастăп, тесе?

**Микулай.** Пукан çумне пăталамасан та есĕ ăна ху çумна пăталанă пекех ђăмăртаса тытрăн, кунталла йамарăн.

**Маңђă.** Çук, пăталаман вĕт, епĕ Миттă çумĕнђех тăратăп, мана ун çумĕнђе авантарах. Вăн йепле унăн пуçĕ... йап йака та сап-сарă. Миттăна йурататăп епĕ ăна (Маңђă Миттăна пуçĕнђен ађашлаĭ, Митти Маңђăна çурăмĕнђен лăп, лăп, лăп çапса саваĭ, Таңђă хашт сывласа лараĭ).

**Çерахвим атте.** (Таңђăна). Мĕншĕн апла пит йăвăррăн сывласа йатăн? Пирĕнпе ларма скуђнă мар пулĕ вĕт? (Маңђă пуканĕ çине лараĭ).

**Таңђă.** Скуђнă мар та, темшĕн ăшђик варкаĭ, ырра сисмен пулĕ епĕ пайан. (пурте ĕçсе тăра-

naççĕ) сăмаварĕпе ҫей ҫашăккисене илсе кайаҭ, çимелли йапалисем сĕтел çинҫех йулаççĕ).

**Çерахвим атте**. Ниҫҫава! Мĕн хуйхăрмалли халҫ, санăн, çамрăк хĕрĕн. (Ура çине тăраҭ). Ман çавăнта хуйхăллă çынна савăнтарса йамалли емел (тару) пурҫҫĕ ха. (Миҭҭă йенелле пăхса). Илсе килес пулĕ ĕнтĕ ăна?

**Миҭҭă**. А, илсе кил... (Çерахвим атте шкапран пĕр путылкă ерех кăларса сĕтел çине пырсă лартаҭ, пурте пĕр пĕрин çинелле пăхкаласа лараççĕ).

**Маҥҙă**( кулса). Мĕн тăвас тетĕр есир? Ку ерех вĕт сирĕн. Манахсем ерех ĕçеççĕ-и вара?

**Çерахвим атте**. Манах в çиних штанах... Мĕн пулаҭ тет вара пире ерех ĕçнĕшĕн? Епир те çав çынах вĕт.

**Таҥҙă**. Архимаҥтрит пĕлсессĕн мĕн тăвĕ сире?

**Çерахвим атте**. А, а-а! Епир халĕ архимантрит килиҫҫен пĕр витре те ĕçсе йарăпăр, вăл халĕ хăй те çӳçне пуçне силлесе хăсса вырташ пулĕ (кулаççĕ).

**Микулай**. Пĕр витре ĕçсе йараҭҫен халĕ вăтăр хут та вилсе илĕн-ха, кăна ĕçсе йарсан та пырăҫҫĕ те-ха...

**Миҭҭă**. Микулай! Хĕветĕр ма килмесҭ ку таранҫҫен?

**Микулай**. Килеп, тенĕҫҫĕ те вăл, темме килмерĕ.

**Таҥҙă**. Вăл килсессĕн епĕ пурĕ пĕр кайатăп, ăна манăн курассăм килмесҭ.

**Микулай**. Ак тата! Хĕветĕрпе пит лайăх пурăнаттăрҫĕ вĕт есир? (Çерахвим атте стаккансене тултараҭ).

**Таңӑ.** Унпа аван пурӑнатпӑр пулсан епӗ кунта та килместӗп, ҫапла пӗркунне епир, Паңӑпа, Хӗветӗр, тата епӗ, слопотара пӗр ҫӗре хӑнана кайнӑҫҫӗ халхи пек пӑртак ӗҫмелли те пурҫҫӗ. Ҫавӑн ҫинҫен ман атте темле пӗлнӗ те, кайран, тепӗр ик кунтан мана йатларӗ. Ман ҫинҫен аттене Хӗветӗр каласа кӑтартнӑ, теҫҫӗ, кайран хам та пӗлтӗм.

**Ҫерахвим атте.** (Мӑшкӑласа). Ха мур пуҫӗ, мӗн хӑтланаҭ вӑл. Пастай халӗ епӗ ӑна, килтӗр тулӗк, лайӑх пӗре йатлам... (кулаҫҫӗ).

**Таңӑ.** Кулакана пуҫне пулаҭ теҫҫӗ, ытлах ан кулӑр, Хӗветӗр кунта ҫуккине астусах ларӑр... (пурте ҫӑр-ҫӑр пӑхкаласа лараҫҫӗ).

**Ҫерахвим атте.** Мӗн пулӗ-ши вара?

**Миҭҭӑ.** Ну, мӗн тумалла текех! Тавай ӗҫме пуҫлас, тытӑр стакканӑрсене!

**Ҫерахвим атте.** Тавай штошӗ пиллесе Миҭҭӑна ашшин ывӑлин йаҫӗпе сана ҫак куркана паратӑп. (Миҭ. ерех истаҭ).

**Таңӑ.** Аййай есӗр, атте Ҫерахвим!.. Хӑй манах, ҫапах та турӑ йаҭне ерехпе пӑтратаҭ.

**Ҫерахвим атте.** Мӗн аййаййи пур унта, турра епӗ ӑна пӗрре те йатламастӑп, турӑ-турӑ халӗнех йулаҭ, епӗр ӑна тивместпӗр вӗт? Вӑл та пире ан кансӗрлетӗр.

**Миҭҭӑ.** Ахалҫ, сӑмахран калатӑп та ха, маҫҫа ҫинҫе турӑ ҫӑнах та итлесе выртаҭ пулсан?

**Ҫерахвим атте** (ҫӳлелле пӑхса). Курӑнмасҭ те ха. Ей е-е-ей турӑ! Ерех ӗҫетпӗри? (Хӗрӗсем хӑраса пӗршӗнсе лараҫҫӗ).

**Миҭҭӑ.** Хытӑ ан кӑшкӑр, илтӗҫ...

**Ҫерахвим атте.** Кам турӑ илтӗи? Шарламасҭ вӗтха, ӗҫмест пулмалла. Ҫӑх ҫӗрисем вӗт есӗр турӑ-

ран хăратăр. Ну, аҭăр, ĕçсе йарар! Ҟашкăртан хăрасан, вăрмана те тухмалла мар, тенĕ ваттисем. (Çерахвим атте, Миҭҭă, Микулай ĕçсе йараççĕ, хĕрĕсем ĕçмесĕр йулаççĕ).

**Миҭҭă**. Маӊа, мĕншĕн ĕçмерĕн?

**Маӊă**. Ўсĕрĕлесрен хăратăп çав.

**Таӊă**. Маӊă, ĕç ĕнтĕ, мĕн тата... есĕ ĕçсен епĕ те ĕçетĕп. (Пурте „вот молодец“, тесе кăшкăрса йараççĕ, вара пурте стакканĕсене тытса кулса ĕçеççĕ, Маӊă ĕçнĕ ӊухне ӊыхăнса ерехне пĕрĕхтерсе йараҭ, пурте кулса йараççĕ).

**Çерахвим атте** (ерехне тултарса). Ку ӊеретре мĕнле пулĕ, хам çине пĕрĕхтере пуçлĕçи-ха... Ну, килĕр, виттĕрех çавăрса хуратпăр. (Пурте куласшăн лараççĕ, стакканĕсене тытса ĕçме пуçлаççĕ).

**Таӊă**. Сывă пулăр.

**Çерахвим атте**. Тавта пуç, сывăмаррисем çук пулас таха... (ĕçет, ун хыçĕнӊен ыттисем те ĕçеççĕ, Таӊă куллине ӊараймасăр çăварĕнӊи ерехне пĕрĕхтерсе йараҭ).

**Миҭҭă**. Çук... ӊăнахах та кусем пайан ырра сисмен, ерехе турă шывĕ сапнă пек пĕрĕхтереççĕ те пĕрĕхтереççĕ (кулаççĕ).

**Маӊă**. Ўсĕрĕлсе кайас мар ку манахсем патĕнӊе... (Микулайпа Таӊă пăшăлтатса калаçса лараççĕ).

**Миҭҭă**. Ўсĕрĕлсен манахсем патĕнӊи пек ырри çук ĕнтĕ вăл.

**Маӊă**. Мăнастир хапхине питĕрĕç те пĕтрĕ вара пирĕн пурнăç.

**Миҭҭă**. Çук халĕ, каçхи кĕлĕрен тухмасăр питĕрмеççĕ ăна.

**Çерахвим атте**. Питĕрсен питĕрмесен те, сире ваӊӊи вырăн тупăпăр-ха...

**Маӈӡӑ**. Питӗ ӡейе иккен, пире кунта хӑварасшӑн пулӗ те есӗр, кайран килтисем шыраса ҫӳреӡӡӗри вара?..

**Ҫерахвим атте**. Мӑнастире килнӗшӗн кам йатлӗ сире? Ӡиркӳре пултӑмӑр тесе калӑр есӗр, вара йатлама мар, мухтӗҫ те.

**Маӈӡӑ**. Пирӗн атте мӑнастирсене пит кураймасӗ ҫав, кунта килнине пӗлсессӗн, вӑл мана ҫапсах пӑрахӗ. Сирӗн архимантрит хӗрарӑм мӑнастирӗнӡе мӗнле ҫӳренисене вӑл пире пӗркунне йӑлт каласа кӑтартрӗ (кулаӗ).

**Таӈӡӑ**. Пӗр кунне Семиозернӑй пустыӈрен килсени?

**Маӈӡӑ**. Ӑхӑ, вӗсем кайран хӗрарӑм мӑнастирне кайнӑ, ун ӡухне пирӗн аттесем циркра пулнӑ, унтан мӑнастир патне кайса ҫӳренӗ. Сирӗн архимантритпа икӗ манашкӑ пӗр йӑвӑҫ айӗнӡе, лараҫҫӗ тет, аттепе унӑн йулташӗ вӗсем ҫине ҫтена урлӑ ӡулпа петӗмӗр тет те кайран тартӑмӑр, тет. (кулаҫҫӗ), анӡах ӡулӗ архимантритне мар, пӗр манашкине тивет, иккен.

**Ҫерахвим атте**. Ай... архимантритнеӡӡӗ ҫав... мӑн хырӑмӗнӡен паклаттармаллаӡӡӗ (а х ӑ р а ҫ ҫ ӗ кул).

**Миттӑ**. Интереснӑ всетаки...

**Таӈӡӑ** (Маӈӡӑна). Вӗсене каласа кӑтартрӑнтаха, а кайран хамӑ ҫинӡен каласа кӑтартсан аван пулӗ-и?

**Ҫерахвим атте**. Мӗн калаҫатӑн есӗ, епӗр хамӑр пӗлместпӗрим мӗн ун ҫинӡен? Архийерейски таӡӑра мӗн-мӗн тӳса ҫӳренисене каласа кӑтартсан, есӗр тӗленсех кайӑр унтан.

**Маҧӑ**. Епӗ те илтнӗ вӑл ӗҫ ҫинҫен, ун ҫухне унпа пӗрле йепискӑп Михаил та пулнӑ, тет, вара вӗсем пеҫҫеткӑ ҫинҫех ҫывӑрса кайнӑ тет, вӗсене ҫи малтан фермӑра вӗренекенсем курнӑ тет.

**Ҫерахвим атте** (Миҭҭӑ ҫине пӑхса кулса). Ӑҫтан пӗлет вӑл пурне те (кулаҫҫӗ). Мӗнле хӗрсем пулнӑши ун ҫухне вӗсемпе пӗрле?

**Маҧӑ**. Пӗрне пӗлетӗп, Малая Проломная урамӗнпе Филимонӑвӑн булочная пур вӗт? (Миҭҭӑпа Ҫерах. атте „ну, ну“ теҫҫӗ) Вӑт ҫав хуҫа хӗрӗ, пулнӑ, ыттисене пӗлместӗп. (Таҧӑ Микулай ҫумне тайанаҭ, Микулайӗ ӑна ыталаса илсе темскер калаҭ, у н т а н и к ӗ ш т е т у х с а к а й а ҫ ҫ ӗ, вӗсем ҫине пурте пӑхса йулаҫҫӗ).

**Ҫерахвим атте** (Маҧӑна). Вӑт есӗ манахсене ӗҫме йурамасҭ, тетӗн, ӗҫеҫҫӗ вӗт. Сирӗн шухӑшпа ӗнтӗ манахсен кӑна хӑрӑнса пурӑнас пулаҭ, ытти ҫынсене ӗҫсен те йураҭ.

**Маҧӑ**. Ӗҫсе пурӑнас тесен мӑнастире кӗме йурамасҭ, мӑнастирти ҫынсен таса пулмалла (пурте кулаҫҫӗ).

**Ҫерахвим атте** (тутипе кулса). Веҫ, пирӗн архимантрит та пӑхма тап тасах та, анҫах ӑшӗҫикки хура йун (пурте кулаҫҫӗ). Нумайах та тӑмӗ ӗнтӗ, п и т ӗ р е кайӗ. Ун ҫухне вара кун пек анҫах ӗҫмӗпӗрте-ха... Хаљ епӗр ӗҫни, ӗҫни пулаҭи вӑл? Ун ҫухне пирӗн тӗрлӗрен тутлӑ йапаласем: шеколатсем, мармалатсем темӗн те пулӗҫ. Ех вара! (пурте кулаҫҫӗ, М и к у л а й п а Т а ҧ ӑ к ӗ р е ҫ ҫ ӗ).

**Маҧӑ**. Хӑҫан каймалла вӑл?

**Миҭҭӑ**. Ҫитес вырсарни кун.

**Маӊӑ** (Миттӑ йеннелле пӑхса). Ун ҫухне мана ҫӗнӗни?

**Миттӑ**. А какшӑ... ҫӗнмесен йураӣ...

**Ҫерахвим атте**. Ун ҫухне ӗнтӗ Мани те Тани те пурте кунта пулаҫҫӗ (ерехне тултарса) (пурте кулаҫҫӗ). Тавай тепрер ӗҫсе йаратпӑр.

**Миттӑ**. Мани те Тани те Пани те... Траттита, траттита, траттита... (пурте кулаҫҫӗ).

**Ҫерахвим атте**. Ҫӑнах та тӗлӗнмелле, виҫӗшин те йаҫӗсем пӗр манерлӗ. Маӊӑ, Таӊӑ, трамти, трамти... трам (кулаҫҫӗ).

**Миттӑ**. Йаҫӗсем те, хӑйсем те лайӑх ҫав.

**Маӊӑ**. Киле мӗнле кайас, ӳсӗрӗлсе кайрӑмӑр вӗт, вӑн Таӊӑ та пуҫне уснӑ.

**Ҫерахвим атте**. Есӗ Таӊӑ! Ӳсӗрӗлсе кайнӑ иккен (кулаҫҫӗ).

**Таӊӑ**. Епӗ ӗҫме вӗренмен ҫав, ҫасах ӳсӗрлетӗп.

**Ҫерахвим атте**. Ниҫҫава, ӳсӗрӗлмелӗхех ӗҫменха, тытӑр стакканӑрсене, ӗҫсе йарар (ӗҫсе йараҫҫӗ).

**Миттӑ**. Мани те, Тани те, иккӗшӗ те ӳсӗрӗлнӗ. Траттита... траттита, траттита... (ахӑраҫҫӗ).

**Ҫерахвим атте**. Тупрӗҫ ӗнтӗ кулмалли!

**Микулай**. Кулмалли йапаларан кулмасӑр тата, ху тупса патӑн вӗт.

**Ҫерахвим атте**. Еее! Есӗ тин вӑрантӑни? Паҫӑр пӗр хӑйӗн Танине анҫах пӗлет, пирӗнпе калаҫмасӗ те...

**Миттӑ**. Вӗсем тухкаласа та ҫӳрерӗҫ ха, епӗр аса та илместпӗр вӗсене.

**Микулай**. Есӗр тухса кӗме те манса кайнӑ еппин ӗҫкӗ пирки... (пурте кулса йараҫҫӗ) ну тухарха сӗтел хушшинҫен (Миттӑпа Ҫерахвим атте сӗтел

хушшинҗен тухса уткаласа ҫӳреҫҫӗ. Микулай сӗтел хушшинҗен тухса кравач ҫине йăваланса кайат, ун ҫумне Таңҗă пырса ларат).

**Ҫерахвим атте.** Миттă, киттарă йе палалайккă илсе килха... ташша йарăпăр...

**Миттă.** Царкков килте-ши? Ҫавăн пурҗӗ те, ну кайса пăхаси-ха. (тухса кайат, Я в л. сӗтел ҫинҗи саккускăсене ҫиме пуҫлаҫҫӗ, икӗш пӗр пӗринпе пăшăлтатса кулаҫҫӗ, Ҫ е р а х в и м  а т т е шкапран тепӗр путтылкă хӗрлӗ ерех туртса кăларат те сӗтел ҫине лартат).

**Маңҗă.** Кăна ан пуҫла, пурпӗр ӗҫейес ҫук.

**Ҫерахвим атте.** Кăна мар, тата тепӗр иккӗ те ӗҫӗпӗр халӗ... (Миттă палалайккăпа тултанах барыня выҗаса ташласа кӗрет, ун хыҫҫăн Ҫерахвим атте Таңҗăна йарса илсе ҫавăрăнма пуҫлат, Маңҗă пӗҗҗен ҫавăрăнкалат.

**Микулай.** Тавай хам выҗам? (Миттă палалайккине Микулайа парса Маңҗăпа ҫавăрăнма пуҫлат. Микулай палалайккă калат. Пӗр иккӗ ҫавăрăнса илсен Миттă Маңҗăран ӗҫӗрӗнет те Ҫерахвим аттен камилавкине пăтаран илсе тăхăнса Маңҗăпа варкăшма пуҫлат, ыттисем кулса йарса кравач йеннелле сулăнса кайаҫҫӗ, Микулайпа Таңҗă тăрса тараҫҫӗ те сӗтел хушшине кӗрсе лараҫҫӗ, лешсем кравач ҫине йаваланса кайса ҫуйăхаҫҫӗ, унтан тăрса сӗтел хушшине кӗрсе лараҫҫӗ).

**Ҫерахвим атте.** Ну, аҗасем, епӗ те ӳсӗрле пуҫларăм, ачăр пӗр-пӗр йурă йурласа йаратпăр?

**Миттă.** Ачăр-ачăр! Мӗнле йурă йурлăпăр.

**Ҫерахвим атте.** Тавай, каҫхи җана (вырăсла „Вечерний звон“) йурлатпăр! (пурте „тавай, тавай“ тесе кăшкăраҫҫӗ, Ҫерахвим атте тон парсан, пурте йурлама пуҫлаҫҫӗ).

## Касхи ҫан. (Вечерний звон).

Каҫхи ҫан каҫхи ҫан йанрат*)
Нумай вăл шухăшлаттарат.

Ҫамрăк ĕмĕр, ӳснĕ ҫĕр шыв,
Атте ҫурҫĕ хаљ асра шав.

Йулашки ҫан сасси илтрем,
Ĕмĕрлĕхе епĕ кайрăм.

Тек ҫут тĕнҫере еп пулмăп,
Ҫурхи илеме те курмăп.

Ĕнтĕ мĕн ҫуљ хаљ сывви ҫук,
Пĕрле ӳснисем ҫамрăк ҫух:

Вилĕм ăйхипе сывраҫҫĕ,
Ҫан сассине тек илтмеҫҫĕ.

Нӳрлĕ ҫĕр мана та илĕ!
Ҫил хуйхăллă сăвă калĕ.

Тепри ман вырăна йулĕ,
Ман каҫхи йуррăма йурлĕ.

{ Урăх турă йурри йурласанта йурат.

(Йулашки сыпăкне йурлама пуҫласан, сасартăк алăк хыҫĕнҫе шаккани илтĕнсе кайат, пурте шартах иксе ӳкеҫҫĕ).

**Ҫерахвим атте.** Маҫă, Таҫă... крават айне... крават айне! Кĕрĕр! Ҫасрах, ҫасрах!.. (Миттăпа Микулай вилес пек кулаҫҫĕ, алăк патĕнҫе тата шакпат, сасă пирĕн турă ҫырлах пире тет).

**Ҫерахвим атте.** Амин... амин... (Соҫҫим атте кĕрет). Мĕн сĕтĕрĕнсе ҫӳретĕн есĕ? Мĕн кирлĕ сана?

---

*) Ку йурра епĕ рифмăсем, риттăмсем пулҫҫăр, тата тĕрĕс куҫарас тесе мар, мăнастирте йурланă пек куҫарнă.

Явление.

**Соççим атте** (Пукан çине ларат̆). Йалан ĕçпе çӳресен...

**Çерахвим атте.** Ĕç çук пулсан тата мĕн тума килтĕн? (Мит̆т̆апа Микулай çурсаспарах кулаççĕ).

**Соççим атте** (Мит̆т̆ă çине пăхса). Ей тус. Мĕн пулнă ăна?!

**Мит̆т̆ă.** Темĕн. Ыйтха хăйинђен, кам пĕлет ăсне.

**Çерахвим атте.** Нимĕн те пулман, вăхăтсăр çӳрекен çынна курас килмест манăн.

**Соççим атте.** Кайăп-çке кайăп, ерех ĕçме кансĕрлерĕм пулĕ те ĕнтĕ, сирĕн ерех мана кирлĕ мар (тухса кайма тăрат̆, çав вăхăтра Çерахвим атте е р е х тултарат̆).

**Çерахвим атте.** Ан кай-ха!

**Соççим атте.** Мĕншĕн тата?

**Çерахвим атте** (пĕр стаккан ерех парса). Ме тыт, атту есĕ çилленсе кайăн...

**Соççим атте.** Çук, çук. Кирлĕ мар кирлĕ мар.

**Мит̆т̆ă.** Ĕçсе пар ĕнтĕ, мĕн çветтуйланса тăратăн! тата!

**Çерахвим атте.** Тыт ђасрах, çакна анђах паратăп! Урăх çук... Пĕтрĕ... вĕт...

**Соççим атте** (сĕтел патнелле пырса). Ай, сирĕнпеле... (тытса ĕçсе парат̆ те).

**Пурте:** Вот мелодец! (теççĕ).

**Çерахвим атте.** Халĕ ĕнтĕ ху та пирĕнпе пĕрле сопорти архитийаккăн пек мĕкĕрме тытăнăн (кулат̆).

**Соççим атте.** Мĕн калаçан Çер. атте (ыттисем вăрттăн кулаççĕ). Отец Çерахвим!

**Çерахвим атте.** Мĕн мурĕ!

**Соççим атте.** Ха, тата темле калаçа пуçларĕ... ан урса кайха есĕ...

**Çерахвим атте.** Ну, кала, кала ҫасрах!

**Соççим атте.** Каласан та ахалех пулĕ те ха, çапах та каласа пăхам-ха: есĕ мана пĕр вун икĕ тенкĕ кивçен памăнши?..

**Çерахвим атте** (тĕлĕнсе). Мĕн, мĕн, тетĕн? Есĕ мăшкăлатăни, ҫăнах калатăни?..

**Соççим атте.** Мăшкăласа пулаĭи?.. Есĕ çук пулсан çук те.

**Çерахвим атте** (ерех кĕленҫине тытса). Акă ман укçа, куратăни? (Миĭĭăпа Микулай кулаççĕ).

**Соççим атте.** Çук пулсан çуках ĕнтĕ вăл... Кайасха (алăк патнелле утса кайаĭ).

**Çерахвим атте.** Мĕн тума кирлĕ пулҫĕ сана укçа?

**Соççим атте.** Çав куçлăха (очки) нийепле те тӳлесе илейместĕп вĕт-ха, çавна тӳлесе илме ытатăп.

**Çерахвим атте.** Куçлăх та вара 12 тенкĕ тăраĭи?

**Соççим атте.** А ылттăнлă вĕт-ха вăл...

**Çерахвим атте.** Ылттăн куçлăх тăхăнас тесен, епĕ таçтан та тупăп укçа!

**Соççим атте.** Укçи пулĕтеха вăл, анҫах мана хаҫ кирлĕҫҫĕ-ха.,.

**Çерахвим атте.** Тӳлесе илсен, ху та ĕнтĕ ҫиркӳре ылттăн куçлăхпа йалтăртатса çӳретĕн ĕнтĕ. Архимантрит та, есĕ те вара ылттăн куçлăхлă пулатăр иккен (кулаççĕ).

**Соççим атте.** Отец Çерахвим вăл çынтан мăшкăлас тесен таçта кайса кĕрĕ вара.

**Ҫерахвим атте** (кулса). Тупӑта туршӑнта мӑшкӑласа мар.

**Соҫҫим атте.** Кайас пуђ, каҫарӑр мана (тухса кайаҍ).

## ЯВЛЕНИЕ.

**Ҫерахвим атте.** Каҫмалли ҫук унта (пурте кулаҫҫӗ).

**Миҍҍӑ.** Маңӑ, тухӑр! (лешсем йӑшӑлтатса тухаҫҫӗ). Ларӑр сӗтел хушшине ларӑр (лараҫҫӗ. Таңӑ краваҍ ҫине Микулай ҫумне лараҍ).

**Ҫерахвим атте.** Микулай тухса пӑх-ха, итлесе тӑмасҍи ҫар ђикун алӑк патӗнђе (Микулай краваҍ ҫинђен тӑрса алӑкне уҫса пӑхаҍ). Итлесе тӑраҍ пулсан ҫапса йӑвантар хӑйамат пуҫне (кулаҫҫӗ).

**Микулай.** Ҫук... (каллех краваҍ ҫине йӑванса кайса Таңӑна ыталаса илет).

**Маңӑ.** Мӗншӗн апла курайmастӑр-ха ӑна?

**Ҫерахвим атте.** Ҫав йӗке хӳрене кам йуратӗши Архимантритран ырӑ йат илтесшӗн вӑл ђунне сутма хатӗр вӗт. Ылттӑн кусӑлӑх илесшӗн тата, вӗтӗннӗ, хӑйне кура мар... Ђиркӳре ђислӑ ҫӳрет пулаҍ вара.. Слушит тума вӗренидђен, хӑйне ђиркӳре суккӑр ыйткалакана ҫавӑтса ҫӳренӗ пек кӑтартса ҫуређђӗҫ.

**Маңӑ.** Ђӑнах та вӑл сирӗн пит нађар слушит тӑваҍ.

**Ҫерахвим атте.** Мӗн пӗлет вӑл! Йектенийасем каланӑ ђухне, капла тутине тавӑрса пӑрахса „ме, ме, ме, ме“ тесе тӑраҍ (пурте ахӑрса йараҫҫӗ). Ҫапла пулмалла хулари мӑнастир тийаккӑнӗсен? Хам архимантрит! пулсан епӗ ӑна тахҫанах пӗр усал йала хӑваласа йамалла. Айта, йалта хуҍ пыраҍ, йалти тӗттӗм халӑха шӑна пек пайлатса

кăтартсан та йурат҄. А кунта хулара вĕт-ха? Хулари халăх ђиркӳве мĕншĕн çӳрет? Хитре йурланине тийаккăнсем мĕкĕрнине итлеме анђах...

**Маңђă** (кулса). Епĕ хамта кунта ђиркӳве кĕлтума мар, йурланине итлеме анђах, мĕн пуринђен ытла çамрăк манахсене пăхма анђах килетĕп (кулаççĕ). Пурте: çапла пулмасăр çапла çав.

**Таңђă**. Ђăнах та мăнастирсене (турра кĕлтума) халăх нуммай пырат҄. Пĕрре епĕр аннепе Райевски мăнастирне кайрăмăр. Мăнастир патне çитесси пĕр çур çухрăм йулнăђĕ пулĕ. Курах кайрăмăр манастир алăкĕ патĕнђе, тăп тулли халăх йашăлтатат҄. Епĕр те мăнастир патнех çитрĕмĕр, пурте ӳксе пуççапса кĕл тăваççĕ, халăх мăнастир килкартине кĕме те хăйаймаст҄, манахсем тулалла тухсан, çыннисем пурте ӳксе пуççапса вĕсен аллисене ђуптăвасшăн тăрăшаççĕ, çамрăк манахĕсем вара, хăйсен аллисене ђуптума тытăнсан, ăйăрсем пек тĕпĕрт анђах тапса сикеççĕ, хăйсем тата вилес пек кулаççĕ. Епĕр аннепе такçанђђен пăхса тĕлĕнсе тăтăмăр, çавăнтан вара пирĕн анне те епĕ те мăнастиртен сивĕнтĕмĕр (пурте кулаççĕ).

**Çерахвим атте**. Йалти çынсем манахсене турă ађисем теççĕ вĕтĕ...

**Миттă**. Епĕр еппин турă ађисем пулатпăри-ха акă турă ађисем мĕлле ерех ĕçеççĕ (пурте кулаççĕ).

**Çерахвим атте**. Епĕ те, Таңђă калашле, тийакăна тухсан тепĕр куннех, киле кайрăм. Йалти ват карђăксем таçтан пĕлнĕ епĕ килнине? Тепĕр куннех, пĕр вунă карђăк пулĕ, ман пата кăшăлтатса пыђĕç. Пыђĕç те пурте ман умма ӳксе пуççапса манран пиллĕх илђĕç.

**Миттă**. Есĕ вара паҫăшкă пекех пиллесе аллуна ҫуптутартăни?

**Ҫерахвим атте**. Ҫуптутармасăр тата (аллине пилленĕ ҫухнехи пек тытса). Ак ҫапла пиллесс патăм (пурте ахăраҫҫĕ). Ашшин ывал. ҫв. сывл йаҫĕпе тата.

**Миттă**. Мĕн шырама пынăҫҫĕ хăйсем сан патна?

**Ҫерахвим атте**. Паллă ĕнтĕ мĕншĕн. Мăнастир ваҫли укҫа пама пынăҫĕ: хăшĕ 10 тенкĕ, хăшĕ 20, хăшĕ 15 тенкĕ паҫĕҫ. Кайран вĕсем шасалсан, укҫана суса пăхатăпта ҫитмĕл тенкĕ шăп кăна (кулаҫ).

**Миттă**. Ăҫти мăнастире патăн вара вăл укҫана?

**Ҫерахвим атте**. Ăҫти мăнастире. Паллă ĕнтă кăҫ мăнастире. Кăҫта паратăн! акă хам кăсйари мăнастире. Сирĕн шухăшăрпа сахаҫ кирли мана?

**Пурте**: Вăт мур! (кулаҫҫĕ).

**Ҫерахвим атте**. Малтан вĕсем, хăш мăнастире парсан аванрах пулĕши, тесе ыйтрĕҫ. Епĕ, хулари мăнастире, Зиланттăв мăнастирне парсан авантарах пулаҫ, сирĕншĕн унта, хăвăр вилсен, кашни кун панихит слушит тăвĕҫ! терĕм те, вара пурте савăнса кайрĕҫ, укҫисене ўксе пуҫҫапса кăлара кăлара паҫĕҫĕ (ахăраҫҫĕ). Епĕ савăннипе ҫĕлхене йапалт кăларса ҫавăрса ҫыртрăм (хытă ахăраҫ.

**Пурте** (пуҫĕсене лăкаса) ну, отец Ҫерахвим!

**Миттă**. Манăн та ҫўҫсене вăрăмрах ўстерес теха, кайса килес пĕрре хамăр йала. Тен отец Ҫерахвимрен те ытларах тупăп. Хусанти мăнастир тесен, пирĕн йал вутра ҫунма хатĕр.

**Таҫă**. Хусанта мăнастирсем нумай, тен вĕсем Спаски мăнастиршĕн, йе Иванăвски мăнастиршĕн тесе парĕҫ?

**Миттă**. Çерахвим атте калашле, укçи алла кĕрсен хăш мăнастире памаллине пĕлĕттĕм те ха ăна...

**Çерахвим атте**. Санăн çŭçŭсем ŭссе вăрăмланаҫҫен халĕ 99 улшăну та пулĕ. Тавай ха вăт çак ерехе ĕçсе йарар кайран пуçтарса лартас (ерехне тултарма тытăнат).

**Миттă** (Таҥăпа Микулай çине пăхса). Мĕн çинҫен кăна калаçмарăр пулĕ ĕнтĕ есир пайан.

**Çерахвим атте**. Епĕ манса та кайнă вĕсем çинҫен. Ей çитĕ ĕнтĕ сире унҫухлĕ аҫашланма, килĕр ĕçме! (Микулай Таҥине çавăтса сĕтел хушшине пырса лараççĕ). Тăвай, тытăр стакканăрсене!

**Маҥă**. Мана урăх кирлĕ мар, тем парсан та ĕçейместĕп.

**Миттă**. Епĕ те урăх пултараймастăп... отец Çерахвим! пирĕн Таҥăпа Микулай сахал ĕçрĕç, çавсене ăраснах пĕр икшер стаккан ĕçтермелле

**Пурте** çапла кирлĕ кирлĕ.

**Таҥă** (кулса). Епĕ пĕрре те хирĕç мар, тыт Микулай, пĕрре иксĕмĕр асăнмалăх ĕçер.

**Микулай**. Тавай кил. (Тани Микулайне „пысăк манах пул, çветтуйа тухмалла пултăр“ тесе ĕçет, пурте кулаççĕ; Микулайĕ Танине „манаха каҫҫа каймалла пултăр“ тесе ĕçет).

**Таҥă**. Турă ан хуштăр манаха каҫҫа кайма.

**Миттă**. Апла калани пире кăмăллах мар та, мĕн тăвас ĕнтĕ...

**Çерахвим атте**. Санăн мĕн пăшăрханмалли пур есĕ манах мăр вĕт, певҫий анҫах, манăн ĕнтĕ ват-супнăскерĕн, пăшăрхансан та пырат, авланса ырă курма пулмарĕ (хĕрĕсем кулаççĕ).

**Микулай**. Йе кам та пулсан вăрттăн итлесе тăнă пулсан епĕр калаçнине?

**Çерахвим атте**. Ай, калаçа паратăн!.. Кама пит нушнă вăл епĕр мĕн тунине сыхласа çӳреме? Манахсем йепле пурăннине пĕлмеççĕ тетĕн пулĕ есĕ. Йалти тĕттĕм халăх пĕлмĕ ĕнтĕ хуй, мăнастирсемпе елхерейсене çав анҍах кирлĕ (кулаççĕ).

**Микулай**. Çапли çапла ĕнтĕ вăл...

**Çерахвим атте**. Тата мĕн кирлĕ сана? Мăнастиртех пурнатăн вĕт, таçта писсăра мĕне кайман. (Çерахвим атте ерех тултарма пуçлай çав вăхăтра Ратошкевиҍ кĕрет вăл кĕнине малтан Маҍă курай те йĕрсе йарай ыттисем вăл йĕнипе ун çине пăхма тытăнаççĕ те труках Ратошкевиҍа курса сиксе пурте хапт сывласа илеççĕ).

**Çерахвим атте**. А-а-а хоспотин Ратошкевиҍ!.. Иртсе ларăр...

**Ратошкевиҍ** (Маҍăна) Хăçан килтĕн есĕ кунта?!

**Маҍă**. Мана илĕртсе илсе килҍĕç те йамаççĕ (макăрай).

**Ратошкевиҍ** (кăшкăрса). Хăçан килтĕн тетĕп епĕ сана!!! (Маҍă шари çухăрса йарса макăрай, Микул. Таҍă тухса шăваççĕ, Çерахвим аттепе Миййă Ратошкевиҍ çине пĕр хускалмасăр пăхса тăраççĕ). Кай киле ҍасрах! (Маҍă тата ытларах макăрса йарай).

**Маҍе** (Макăрса) Атте каçар мана?!

**Ратошкевиҍ**. Кай, кай ҍасрах! (Маҍă питне аллисемпе хупласа макăрса тухса кайай.

**Çерахвим атте**. Ма есĕр апла хăвăр хĕре хăвăрах кураймастăр!..

**Ратошкевиҍ**. Епĕ хам хĕрпе хам хутте мĕн тăвам, сирĕн ĕç çук! Анҍах есĕр ăна илĕртсе килме

пĕлнĕ пулсан, унтан нимĕн тĕлĕнмелли те çук, мĕншĕн тесен есĕр аптăраса тем тума та пултарăр. Ман хĕр халĕ вăл çамрăк, 17 çулта анђах, ăна есĕр хăвăр пата илсе килнипе ăна намăс тумастăр, хăвăра намăс тăватăр. Анђах есĕр намăс пĕлес çынсем мар, çавăнпа та сире урăх май сут тăвĕç.

**Çерахвим атте.** Пастай, — пастай! Ытла шала кĕрсе пайа пуçларăн есĕ. Вĕсем ђиркӳве кĕмелле кĕђĕç вĕт пирĕн пата.

**Ратошкевиђ.** Ма суйатăн есĕ?!

**Çерахвим атте.** Суйса пулаťи? Есĕ ху суйатăн: хăвăн хĕрне 17 çулта анђах тетĕн, а вăл 20 çула çитнĕ...

**Ратошкевиђ** (пуçне суласса). Ееех, намăссăр, йытă пиђĕ! Ђиркӳ йађĕпе, манах йађĕпе есĕр халăха улталаса пурăнатăр. Çак ерехе есĕр кам укçипе илнĕ? Тĕттĕм халăх укçипе.

**Çерахвим атте.** Мĕн çитмерĕ сире! Мĕн есĕр манахсенђен кулса çӳретĕр! тухса кай кунтан!

**Ратошкевиђ.** А-а-а... Вăн мĕнле калаçа пуçларĕ вăл... кулса çӳретĕр тет. Ех, уссăрскерсем, çĕрĕк светтуй ушкăнĕсем, вăрăсем!

**Çерахвим атте** (кăшкăрса). Мĕн вăрларăм епĕ санне, е! Мĕншĕн тапăнтăн есĕ пире?!

**Ратошкевиђ.** Манне вăрламан пулсан та халăхăн ђиркӳве панă укçисене вăрласа ĕçсе пурăнатăр! Выçлăхсем, çăхансем! Есĕр манне вăрлайас çук, епĕ сирĕн пата пĕр пус та парас çук.

**Миťťă.** Ку пирĕн пата путлĕ ĕçпе килмен, кайса ђĕнсе килес епĕ архимантрита. Халех сана вăлă сирпĕтсе кăларса йарĕ, асту çакланатăн!

**Ратошкевиђ.** Айта, ђĕнсе кил, ђĕнсе кил!.. Епĕр унпа пĕлĕпĕр мĕнле калаçмаллине. (Миťťă

тухса кайма пуçлаĭ, Ратошкевиҫ уткаласа çӳрет, çав вăхăтрах Хĕветĕр алăк патĕнҫе шаккаĭ).

**Хветĕр** (кулса, хытă кăшкăрса). Пирĕн турă çырлах пиреее! (пурте пĕр пĕрин çине пăхкаласа куллисене ҫараймасăр хăшт, хăшт туса тăраççĕ).

**Хĕветĕр** (тата хытăрах кăшкăрса). Пирĕн тура çырлах пиреее!!!

**Ратошкевиҫ** (ҫăтаймасăр кулса йарса). Кĕр Хветĕр! (Хветĕр кĕрет).

**Хветĕр** (кулкаласа). Мĕн тĕлĕнсе тăратăр есĕр, отец Çерахвим, сирĕн архимантрит килҫĕ.

**Çерахвим атте**. Ҫăнах-и?

**Хĕветĕр**. Ҫăнах, ҫăнах... икĕ майра лартнă...

**Миттă**. Апла пулсан йураĭ!..

**Ратошкевиҫ**. Тата ма каймастăн архимантрит патне? Кайма тапраннăҫĕ вĕт есĕ?

**Миттă**. Кайăп-ха...

**Хветĕр**. Ерех ĕçнĕ çинҫен архимантрит патне кайаççи вĕсем... (Çерахвим атте патне пырса, хулпуççинҫен тĕксе). Ей, лайăх иртрĕи ĕçкĕ отец Çерахвим? (Çав вăхăтрах) çапла çав çветтуй çынсем халăх йунне ĕçекесем... эх своложсем (алăка хыта хупса тух).

**Çерахвим атте** (Хĕветĕре). Кай кунтан к чертовой матери! (тĕксе йараĭ).

## ЯВЛЕНИЕ.

**Хветĕр**. Есĕ мĕскер тĕрткелешетĕн. Мĕн кирлĕ сана?! (Çерахвим аттене пĕсехинҫен йарса илет.

**Çерахвим атте**. Ара, ара есĕ... Мĕн пулҫĕ сана? Кай кунтан çăва патне!!! (хăлха ҫиккинҫен йанлатарса йараĭ).

**Миттă.** Ах упăтесем, пăрахăр! Архимантрит илтсен пĕтетпĕр вĕт (лешсем çаплах тапăçаççĕ).

**Хветĕр.** Ай, ђорт воçми... Сана та мăшкăлаттар... (пĕсехинђен йарса илсе силлесе). Вĕлеретĕп.

**Çерахвим атте.** Йар! йар тетĕп!

**Хветĕр.** Есĕ ма çапрăн мана (ђышкипе йунаса) асту светтуй атте! сана çакăнтах.

**Çерахвим атте.** Кай тетĕп. Темĕскер туса пăрахăттăн есĕ?!

**Хветĕр** (Ç е р а х в и м  а т т е н е силлесе). Еее, ухмахланатăпи?

**Çерахвим атте.** Кай, ђорт!.. (Вăйпа кăшкăрса йарайте, Хветĕре пĕсехинђен ђышса тĕртсе йарай). Мĕн тума çыхлантăн-ха есĕ ман çумма?! (икĕш те хашăлтатаççĕ). Вăт усал!..

**Хветĕр.** Есĕ çапмарăни-ха малтан?.. (Çерахвим аттене шан тутарса йарай, Çерахвим атте хирĕç хулпуççинђен шап тутарай, тапăçса кайаççĕ).

**Миттă.** Ђарăнăр, мурсем!.. (пырса уйăрса йама тытăнай, çав вăхăтрах пĕр çамрăк манах, икĕ ват манах ђупса кĕреççĕ).

**Çерахвим атте** (Хветĕр айĕнђе выртса). Ђарăрах тархасшăн! (Ват манахĕсем Хветĕре тытса Çерахвим атте сирсе пăрахса), мĕн тăватăр есĕр, мĕн тăватăр? теççĕ, Миттă тухса шăвай, ун хыçĕнђен тепĕр çамрăк манахĕ те тухса тарай, Хветĕр сиксе тăрай те икĕ ват манахĕсене пĕрер парса йăвантарса йарса тухса тарай, пĕр манахĕ ун хыçĕнђен хăвалама тухса ђупай).

(Ђ а р ш а в  а н а й).

Хакĕ 35 пус. Цена 35 коп.

Угрофинский отд.
совнацмена Н-проса

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

СЕМЕНОВ, Т. С. В монастыре

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СОЮЗА ССР
МОСКВА, НИКОЛЬСКАЯ 10